Пенси ыйтăвĕсемпе

Ĕç пенсийĕн шайне ўстерес темеслĕ-и?

2008 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ «О дополнительных страховых взносах на накопительную часть трудовой пенсии и государственной поддержке формирования пенсионных накоплений» 56 № Федераллă саккун çине алă пуснă. Пирĕн вулакансене интереслентерекен ыйтусем çине эпир РФ Пенси фончĕн районти уйрăмĕн харпăр хăй (персонифицированнăй) учечĕн тата страхователь семпе, страхланă çынсемпе çыхăнса ĕçлессин, парăмсене шыраса илессин пайĕн пуçлăхне О.Н. АЛЕКСЕЕВАНА хуравлама ыйтрăмăр.

ĔÇЛЕКЕНСЕМ ВАЛЛИ

Кирек епле ĕçлеме пултаракан çын та, вăл миçе çултине тата мĕнле профессипе ĕçленине пăхмасăрах, патшалăх финанс пулăшăвĕпе усă курса хăйĕн пулас пенсийĕн шайне ўстерме пултарать. Çакна валли унăн çулталăкне 2000 тенкĕрен кая мар (е уйăхне 167 тенкĕ) хушма страховани взносĕсем тўлесе тăмалла. Çын Раççей Пенси фондĕнчи харпăр хăйĕн пухăнса пыракан счечĕ çине куçарнă кашни пин тенкĕ пуçне патшалăх татах тепĕр пин тенкĕ куçарса парать, анчах та çулталăкне 12000 тенкĕрен ытла мар.

ĔÇЛЕКЕН ПЕНСИОНЕРСЕМ ВАЛЛИ

Енчен те пенсие тухнă çын хăйĕн ĕç пенсине илме Пенси фондне пымасть (ăна илме документсем хатĕрлесе памасть) пулсан, патшалăх çыннăн кашни 1000 тенки пуçне 4000 тенкĕ куçарса парать. Ку вăл çулталăкне 48000 тенкĕ шайĕнче пулать.

Çавăнпа пĕрлех ку укçатенкĕ ан йўнелтĕр тата хушма тупăш парса тăтăр тетĕр пулсан, конкретлă ертсе пыракан компание суйласа илме пулать. Ку вăл патшалăх е харпăр хăйĕн компанийĕ те пулма пултарать. Е тата ку укçатенкĕне вĕсемпе тивĕçтерсе тăракан патшалăха пăхăнса тăман урăх пенси фондне те куçарма май пур.

Çак программăна 2008 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 5 çул хушшинче кĕме пулать. Программăна уйрăм вăхăтлăха палăртнă. Патшалăх программăна кĕнĕренпе 10 çул хушши тўлевсемпе тивĕçтерме шантарать.

Асăннă Федераллă саккуна 2001 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче йышăннă «Об обязательном пенсионном страховании в Российской Федерации» 167-ФЗ № Федераллă саккунпа килĕшўллĕн çынсене пенсипе тивĕçтерессин шайне ўстерес, çавна валли лайăхрах майсем туса парас тĕллевпе йышăннă.

Саккунпа пулас пенси валли укçа-тенкĕ пухăнассине патшалăх пулăшма шантарать.

Программа участникĕ пулас тесен мĕн тумалла?

4-мĕш статьян 1-мĕш пункчĕпе килĕшўллĕн обязательнăй пенси страхованийĕ енĕпе ĕç пенсийĕн пухăнса пыракан пайĕ çине хушма страховани взносĕсем тўлесе тăрас тесен РФ Пенси фончĕн территори органне гражданинăн хăйĕн е ĕç параканăн пырса заявлени çырса памалла. Заявленире гражданинăн харпăр хăй лицевой счечĕн страховани номерне, хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, вăл ăçта пурăннине кăтартмалла. Заявлени формине тата ăна çырса тултармалли инструкцие РФ Пенси фончĕ çирĕплетет.

Халĕ чылайăшĕ уйрăм çынсем патĕнче ĕçлет. Страховани свидетельствисене те туса хатĕрлемеççĕ. Вĕсен мĕнле пулмалла?

Гражданинăн харпăр хăйĕн лицевой счетне уçман пулсан, 1996 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче йышăннă ФЗ-27 № «Об индивидуальном (персонифицированном) учете в системе обязательного пенсионного страхования» Федераллă саккунпа килĕшўллĕн (калăпăр, вăл официаллă ĕçлемен) заявленипе пĕрлех вăл пуçламăш регистраци валли кирлĕ сведенисене тăратать.

Программа хăш вăхăтран вăя кĕрет-ха?

2008 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса заявлени çырса парсан 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса патшалăх пулăшăвĕпе усă курса ирĕклĕ пенсисен виçисене ўстерме май пур. Вĕсене вара пенсие тухнăранпа илме май килĕ (халĕ ĕçлекенсен тата пенсие тухма хатĕрленекенсен). Пенсионерсен ку йĕрке кăшт урăхларах.

ПУР КАТЕГОРИСЕМ ВАЛЛИ ТЕ

Ирĕклĕ майпа взноссем куçарса пенси виçине ўстермелли программăна хутшăнма камсен право пур?

Ĕçлекен кирек епле çын та, вăл миçе çултине пăхмасăрах, обязательнăй пенси страхованийĕн системинче страхланнă пулсан. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса пенси виçине ўстерес кăмăллисен çакна кăна манмалла мар: пенсин пухăнакан пайĕ çине хушма взноссем куçарасси пирки килĕшĕве 2008 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2013 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен тума пулать. Патшалăх страхланă çынсем ĕç пенсийĕн пухăнса пыракан пайĕ çине хушма взноссем тўлеме тытăннă çул хыççăн тепĕр çултан укçа куçарса пама тытăнать. Ку пулăшу 10 çул хушши тăсăлать.

Гражданинăн заявленипе ăçта пымалла?

ĔÇЛЕКЕНСЕМ ВАЛЛИ

Заявление ĕçлекен вырăнта çырас пулать. Ĕç паракан вара 3 кун хушшинче ку заявление РФ Пенси фондне çитерсе пама тивĕç.

(Малалли çитес номерте).

Следствии комитетĕнче

Çынна кўрентерни те преступлени шутланать

Паллă ĕнтĕ, çынна çапни-хĕнени кăна мар, ăна усал сăмахсемпе кўрентерни, çынсем умĕнче намăслантарни, чысне варалани те преступленисен шутне кĕрет. Уйрăмах вара право сыхлавĕн органĕсен представителĕсем хăйсен служба тивĕçне пурнăçланă чухне вĕсем тĕлĕшпе çўлте асăннă ĕçсене туни пысăк преступлени пулса тăрать. Айăплисен уншăн ответ тытма тивет.

Ку ĕç вара 2008 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнче пулса иртнĕ. 19 сехет тĕлĕнче районти шалти ĕçсен пайне шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем Юрий Вениаминович Иванова илсе пынă. Вăл ўсĕр пулнă, административлă майпа правăна пăсни те куçкĕретех.

Шалти ĕçсен пайне илсе пыни ўсĕр çынна килĕшсех кайман. Милици лейтенанчĕ А.М. Ванюшкин Ю.В. Иванова административлă право йĕркине пăснин факчĕсене ăнлантарса пама тытăнсан, лешĕ ун çине киревсĕр сăмахсемпе кăшкăрашма, çынсем умĕнче кўрентерме тытăннă. Çапла хăтланнă чухне вара вăл шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕ хăйĕн служба тивĕçĕсене пурнăçланине пĕлмен мар ĕнтĕ.

Кун пек туни Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 319-мĕш статйипе тата РФ Уголовнăй Процессуаллă Кодексăн 140-мĕш, 145-мĕш, 146(147)-мĕш статйисемпе, 156-мĕш статьян 1-мĕш пайĕпе пăхнă преступление тунă шутланать. Çавна май Юрий Вениаминович Иванов тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарма йышăннă, ку ĕçе тĕпчеме тытăннă, постановлени копине район прокурорĕ патне ярса панă.

М. ТАРАСОВ,
РФ прокуратури çумĕнчи Чăваш Республики тăрăх Етĕрнери районсем хушшинчи следствии управленийĕн следствии комитечĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсен следователĕ, 2-мĕш класлă юрист.

Çитĕнў

Чăн-чăн патриотсем çитĕнеççĕ

Муркаш шкулĕнче «Родина» патриотика клубне йĕркеленĕренпе нумай пулмасть пулин те, унăн ўсĕмĕсене пĕлместпĕр мар ĕнтĕ. Çĕнĕрен çĕнĕ чикĕсене çĕнсе илеççĕ кунта вĕренекенсем. Клуб ертўçи, ОБЖ преподаватель-организаторĕ В.Г. Львов ертсе пынипе яшсемпе хĕрсем пăшал хатĕрĕсене вĕренеççĕ, туристсен хатĕрленĕвне хăнăхаççĕ, тинĕс ĕçне тата парашют спортне алла илсе чăн-чăн моряксемпе десантниксем пулма хатĕрленеççĕ.

Клуб членĕсем 3-мĕш çул ĕнтĕ çамрăк моряксен республика ăмăртăвне хутшăнса 1-мĕш степеньлĕ дипломсемпе наградăсене çĕнсе илеççĕ. Халĕ вара вĕсем çĕнĕ çитĕнўсемпе мăнаçланма пултараççĕ – кăвак тўпене парăнтарма пултарнипе: 8 вĕренекен, вăл шутра 1 хĕр парашютпа сикессипе аслă çулхисен 3-мĕш разряд нормативне пурнăçланă! Вĕсем, 900 метр çўллĕшĕнчен парашютпа 3-шер хут сикекенсем, районта пĕрремĕшсем тата республикăра чи çамрăккисем.

Пулас десантниксене эпир çак çитĕнўпе саламлатпăр! Ку хăнăхусем вара вĕсене Рязань хулинче иртекен Пĕтĕм Раççейри «Победа» çарпа спорт ăмăртăвĕсенче те кирлĕ пулĕç. Команда унта июлĕн 21–28-мĕшĕсенче пулать, Чăваш Республикин чысне хўтĕлет. Анăçусем çеç пулчăр çак ăмăртусенче!

Г. БЫКОВА,
район администрацийĕн вĕрентў, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалисчĕ.

Сăн ўкерчĕкре: çамрăк парашютистсем тўпене çĕкленме хатĕр.

Шăпа

Юратăвăн вăхăт чикки çук

е 60 çул иртнĕ хыççăнхи тĕл пулу

1943 çулхи сентябрь уйăхĕнче Сталинград патĕнче йывăр аманнă хыççăн сипленсен, эпĕ Суворов тата Кутузов орденĕсемлĕ Хĕрлĕ ялавлă 82-мĕш Ярцевски стрелоксен дивизийĕн 601-мĕш стрелоксен полкĕн автоматчиксен ротине таврăнтăм. 1944 çулхи март уйăхĕнче каллех йывăр амантăм, контузи пулчĕ. Ытлашши нумаях мар сипленнĕ хыççăн хамăн тăван полка, автоматчиксен çав ротинех таврăнма май килчĕ.

Вăрçă вĕçленнĕ чухне пирĕн дивизи Белоруссие, Прибалтикăна, Польшăна ирĕке кăларассишĕн пынă йывăр çапăçусенче пулнă хыççăн Берлина штурмлама хутшăнчĕ. Фашистла Германие çапса аркатса вăл капитуляци тунă хыççăн пирĕн дивизи Хĕвел тухăç Германие оккупаци çарĕсен шутĕнче юлчĕ.

Халĕ вара сире манăн юлташпа Иван Бывшихпа Германире çар службинче пулнă чухне мĕн пулса иртни пирки каласа парас килет. Вăл нимĕç чĕлхине питĕ лайăх пĕлетчĕ. Тăрук ăна нимĕçсен Хейерод ятлă пĕчĕк хулин çар коменданчĕ пулма çирĕплетрĕç. Тепĕр эрнерен ăна ку хула бургомистрĕ вермахтăн салтакĕ пулнă Гюнтер Вальдхельм таврăнни, учета тăманни пирки пĕлтерет, вăл ăçта пурăннин адресне калать.

Комендатура сыхлавĕнче ĕçлекен икĕ автоматчика пĕрле илсе Иван çав салтакăн килне каять. Çурчĕ икĕ хутлă, кунта чухăн çынсем пурăнманни каламасăрах паллă. Çуртăн пĕрремĕш хутĕнче никама та тĕл пулма май килмест. Иккĕмĕш хута хăпараççĕ. Залра виçĕ хĕрарăм ларнă. Комендантпа салтаксене курсан вĕсем хăраса каяççĕ, сывлăх сунаççĕ. Вĕсенчен пĕри вара питĕ илемлĕ çамрăк хĕр пулнă. Кунта чăннипех те Гюнтер Вальдхельм пурăннине палăртнă хыççăн комендант вермахт салтакне зала пыма хушать. Анчах та Гюнтер йывăр чирленĕ пулнă иккен. Иван салтакăн документчĕсене тĕрĕслет, чир çăмăлланса комендатурăна кĕрсе тухма хушать.

Залра вара Гюнтер амăшĕпе мăшăрĕ тата вĕсен хĕрĕ Лиза пулнă иккен. Иван ăна тўрех юратса пăрахать. Хĕр те Ивана килĕштерсе пăрахать. Çар çыннисем кăштах калаçкаланă хыççăн тухса каяççĕ.

Çавăн хыççăн Иванпа нимĕç хĕрĕ куллен тĕл пулма тытăнаççĕ. Каçсерен пĕрле уçăлса çўреççĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне юратни çинчен пĕлтереççĕ. Пĕр уйăх иртнĕ хыççăн Лиза комендатурăра çывăрма юлать... Тепĕр уйăхран вара Иван хăй ăна кавча илме хатĕр пулни çинчен пĕлтерет. Хĕр те килĕшет. Анчах та ун чухнехи саккунсем паянхи пек пулман çав. Совет çарĕсен командованийĕ вĕсене пĕрлешме ирĕк памасть. Çитменнине дивизие салатса янă май Иванăн Совет Союзне таврăнма тивет. Яшпа хĕр пĕр-пĕрне манмастпăр, хăçан та пулин çапах пĕрле пулатпăр тесе тупа тăваççĕ.

Çапла вара 1946 çулта Иван Бывших демобилизаци йĕркипе хăйĕн тăван вырăнне – Красноярск крайĕнчи Çĕпĕр ялне таврăнать. Çыхăну институтне вĕренме кĕрет, ăна ăнăçлă вĕренсе пĕтерет. 10 çул хушши çырусем çўретеççĕ вĕсем.

Хейерод хулинче хĕре вырăс коменданчĕпе килĕштернĕ пирки юратсах каймаççĕ. Çавăнпа та унăн ФРГна куçса кайма тивет.

Иван Бывших радиореле строительствинче пысăк постсем йышăнать, кĕнекесем пичетлесе кăларма тытăнать, писательсен союзĕн членĕ пулса тăрать.

Пĕррехинче ăна партин хула комитечĕн секретарĕ хăйĕн патне чĕнсе илет те нимĕç хĕрĕпе тытакан çыхăнусене пăрахăçлама хушать. «Сирĕн юрату хутшăнăвĕсем пирки пĕлетпĕр. Анчах та вăл ГДР-та мар, ФРГ-ра пурăнать. Тен ăна Америка разведки хăйĕн серепине çаклатнă? Эсир вара служба тивĕçĕсене пурнăçланă май сахал мар патшалăх вăрттăнлăхĕсене пĕлетĕр. Эсир çыру çўретме пăрахатăр, е...»,– тет вăл ăна.

Çакăнпа вĕсен çыхăнăвĕ татăлать. Иван Бывших авланать. Анчах та ăнăçлах мар. Арăмĕ уйрăлма хистет. Уйрăлать вăл, 3 пўлĕмлĕ хваттерне арăмĕпе ачисене парса хăварать. Хăй вара пĕр пўлĕмлĕ пĕчĕк хваттере вырнаçать, унта пĕччен 20 çул ытла пурăнать.

1997 çулта вăл хăйĕн пĕрремĕш юратăвĕ пирки «Ваниляйн тата Лизхейн» аса илў кĕнекине пичетлесе кăларать. Лиза ăна çавăн пек чĕннĕ, вăл вара ăна «Лизхен» тесе чĕннĕ.

Урăх çĕршыв гражданĕсемпе пĕрлешме ирĕк паман саккунсем вăйран тухнă çĕре Иван паллă писатель пулса тăрать. Хăйĕн очеркĕсене ГДР-ти «Sunge Welt» хаçатра та пичетлет. Нимĕç журналисчĕсем пулăшнипе Лизăна шыраса тупма, унăн шăпи пирки пĕлме тăрăшать. Вăл Лизăн Гюнтер пиччĕшне шыраса тупать. Ивана вăл ГДР-а пыма йыхравлать. Анчах та Ваня унта тухса кайма ĕлкĕреймест, Гюнтер вилсе кайни пирки хыпар илет.

Анчах та ФРГ-ри Совет посольствинче ăнланакан çынсем тупăнаççĕ. Вĕсем 2006 çулта Лизăна шыраса тупаççĕ. Вăл çак вăхăта Германире мар, Люксембургра пурăннă ĕнтĕ. Иван Бывших вырăс пирки ыйтсан, вăл тўрех çапла хуравланă: «Ăна лайăх астăватăп, халĕ те юрататăп».

Иван адресне илнĕ хыççăн вăл ун патне çырусем çырма, телефонпа шăнкăравлама тытăннă. 2006 çулхи март–апрель уйăхĕсенче кăна 64(!) хут шăнкăравланă. Мускавра тĕл пулма каласса татăлнă. Иккĕшĕ те унта пынă. 60 çул иртнĕ хыççăн тепĕр хут тĕл пулнă, унченхи юрату çĕнĕрен вăй илнĕ!

Вăл Иванпа уйрăлнăранпа 24 çултан кăна кавча тухнă иккен. Анчах çемье пурнăçĕ йĕркеллĕ пулайман. Вĕсем уйрăм пурăннă. Юратнă çынпа официаллă пĕрлешес пулсан унăн упăшкинчен уйрăлмалла пулнă. Ку ĕç-пуç 2007 çулченех тăсăлнă.

Пĕр-пĕрне юратнă Иванпа Лизăн шăпи пирки «Труд», «Российская газета» тата вырăнти хаçатсем тĕплĕн çырса кăтартнă. Тĕп телевидени вĕсем пирки телеочерк та ўкернĕ. Красноярск крайĕн губернаторĕ Хлопонин икĕ çĕршыв гражданĕсен шăпи пирки пĕлнĕ хыççăн вĕсем валли Красноярск хулинче икĕ пўлĕмлĕ хăтлă хваттер уйăрса панă.

82-мĕш дивизире çапăçнисем çулсеренех майăн 9-мĕшĕнче Мускав хулинче «Аквариум» садра тĕл пулаççĕ. Эпĕ ку тĕл пулусене 32 хут кайрăм ĕнтĕ. 2007 çулта Иван тата Лизхен тĕл пулăва пĕрле килчĕç. Пĕрле çарта пулнисем вĕсен телейлĕ юратăвĕшĕн чун-чĕререн савăнаççĕ.

М. ГАВРИЛОВ,
Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, отставкăри майор, ЧАССР тата РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ, халăх вĕрентĕвĕн отличникĕ.

Юнкă ялĕ.

Сăн ўкерчĕксенче: Ваня тата Лиза. 2006 çул; Лиза мăшăрĕн юлташĕн М.Я. Гавриловăн Мускаври тăванĕсемпе паллашать (2008 çулхи майăн 9-мĕшĕ).